26-26

А. Волккӑв

# ҪӖНӖ ЂИРКӲ

ЂӐВАШ РЕСПУПЛӖКӖНЂИ
КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ

ШУПАШКАР — 1926 ҫ.

М. А. ВОЛККӐВ.

# ÇӖНӖ ҪИРКӲ

ҪӐВАШ РЕСПУПЛӖКӖНҪИ КӖНЕКЕ
КӐЛАРАКАН УЙРӐМ

ШУПАШКАР — 1926 ç.

Чебоксары, типография
Школы Ф.З.У. при Чуваш-
——— госиздате ———
Чувашлит № 441 Зак. № 150
— — Напеч. 5000 экз. — —

## УМĔНХИ САМАХ.

Хаљхи вăхăтра пирĕн ђиркў йĕркисене улăштарас тĕлĕшпе тавлашу пырат. Кун пирки пуринђен ытла пупĕсем пăлханаççĕ. Вĕсем халĕ темиçе ушкăна уйăрăла-уйăрăла, кашни-йех хăйне çийеле кăларма тăрăшат. Пĕр ушкăнĕ ђиркĕве çĕнетсе йамалла тет, мĕншĕн тесен, авалхи ђиркў улпутсенĕн ирĕкне туса тăнă. Капла майпах йулсан, вăл халĕ Канаш влаçне хирĕç пынине пĕлтерет тет. Çавăнпа кĕлĕре улпутсем майлă калакан вырăнсем пулсан, вĕсене унтан кăларса пăрахмалла та, урăххине кўртмелле тет. Тата тийаккăнсемпе пупсем кĕске çўçпе те, кĕске тумтирпе те çўреме путараççĕ. Ĕлĕк авланма йураман пупсене халĕ авланма та йурамалла тет пĕр ушкăнĕ. Çакăх тата ытти улшăнусем те ђирўкре халĕ нумай пулмалла тет. Кун пек шухăшлакан пупсен ушкăнне (ђиркў таврашĕнђе) „Çĕнĕ ђиркў" майлисем, теççĕ. Тепĕр ушкăнĕ ђиркў ĕлĕкхи пекех йулмалла тет, мĕншĕн тесен, ăна турă пăсма каламан тет. Кусем те авалхи пекех

хăварасшăн хытă çапăçаççĕ. Анђах çĕнĕ май тăракан пупсем вăйлăрах пулмалла. Вĕсем пуху туса кив май пыракан патриарх Тихăна вырăнтан кăларђĕç те, хăйсем майлă ĕçлекен „ђиркĕвĕн аслă тытăмĕ“ туса хуђĕç. Вăл халђ те пулин ĕçлет.

Пирĕн ђăваш халăхĕ, хăй тĕттĕмлĕхпе, ђиркӳ мĕншĕн халĕ улшăнма тытăннипе, мĕншĕн çак ик-виç çул хушшинђе пупсем хытă пăтраннине, тата пирĕн ун çине мĕнле пăхмаллине тĕплĕн пĕлсе çитерейместь. Ку тĕлĕшрен çак çыракан пĕђĕк кĕнеке пăртак та пулин усă кӳрсен, епĕ халăхшăн кирлĕ ĕç турăм тесе те шухăшлама пултарăттăм.

Çыракан.

## Ђиркӳн ĕлĕкхи пурнăçĕ.

Халĕ пупсем хăйсемех ĕлĕк ђиркӳ патшапа улпутсене хура халăха пусмăрлама пулăшса тăнă теççĕ. Вăл ђăнахах та çапла пулнă. Ђиркӳ капитталиссене ĕлĕк ĕçлекен халăх йунĕпе тарне ĕçсе ђаплă çуртсем (творетсем), фапрăксавăтсем, çĕр-шыв тытма пулăшса тăнă. Анђах ун ђухне вăл хăйне те манман. Йупа уйăхĕнђе пулнă револђутсиђен ђиркӳ пит пуйан пулнине епир пур те пĕлетпĕр. Унăн аллинђе темĕн ђухлĕ çĕр-шыв, вăрман, çаран пулнă. Вăл вăйлă сутуилӳ тунă. Сăмахран каласан, Соловккă мăнастырĕ темиçе хăма çуракан савăт тытнă. Мускав патĕнђе Çеркийевски лавăр тийеленниниђе тырă-пулă акса, сӳс-кантăрпа сутуилӳ тунă, тата тĕрлĕ фапрăксем те нумай пулнă. Кусемсĕр пуçне ђиркĕвĕнех панккăсенђе те мĕлйун мĕлйунĕпе ылттăн выртнă.



Çавăнпа вĕсен улпутсен ирĕкне тумасан та май пулман, мĕншĕн тесен, çавăн ђухлĕ пурлăха тытса тăмашкăн кирлĕ пулнă. Тепĕр йенђен капитталиссене те, халăха пăхăнтарса тăмашкăн, пупсем кирлĕ пулнă. Çавăнпа ђиркў патшапа улпутсем ирĕкне (влаçне) пит хытă сыхласа тăнă. Пупсем халăха лăплантарса пурăнђђăр тесе, прихутсенђе халăх вăйĕпе ђиркĕвĕсем ларттарнă. Ђиркў улпутсене пăхăнса пурăнма вĕрентнине пурте пĕлетпĕр. Çапла туса ĕлĕк улпутсемпе пупсем пĕр-пĕрин хутне кĕрсе пурăннă.

## Ђиркў Аслă Револђутсийе хирĕç тăрат.

Раççейри рапођђисемпе хресђенсем 1917-мĕш çулта Аслă Револђутси тусан ђиркĕве патшалăхран уйăрђĕç. Ун çинђен пирĕн Тĕп Саккунта лайăх каласа панă. Çапла туса Канаш влаçĕ пупсене ĕлĕкхи пек патшалăх ĕçне туса тăрассинђен ђарђĕ. Тата Канаш влаçех, çĕре улпутсенђен туртса илсе хресђенсене панă ђух, мăнастыр çĕрĕсене те валеçсе йаđĕ. Унтан кăпитталиссенђен фапрăк-савăтсене, панккăсенђе выртакан ылттăн-кĕмĕле илнĕ вăхăтра ђиркўсенне те пĕрлех илђĕç. Çапла ђиркĕве йăлтах патшалăхран уйăрђĕç. Çитменнине тата

унӑн пурлӑхне те туртса илсе, ӑна Канаш влаҫне ҫирӗплетме, хӑй ҫине вӑрҫӑпа килекен тӑшманпа ҫапӑҫма йаҭӗҫ.

Капла туни пупсен кӑмӑлне каймарӗ, мӗншӗн тесен, вӗсен кӑсйине пит хытӑ ҫапрӗ. Ҫавӑнпа вӗсем урӑхла йурла пуҫларӗҫ. Ӗлӗк вӗсем пире хут те мӗнле влаҫ те турӑран килет теҭӗҫ. Йупа уйӑхӗнҭе илнӗ влаҫ „турӑран килет пулсан та“, ӑна вӗсем йышӑнмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӑл ҭиркӳ кӑсйинҭен ылттӑн-кӗмӗле силлерӗ, ҫӗрӗсене, туртса илсе, хресҭенсене паҭӗ. Ӗлӗкхи пурӑнӑҫне каллах тавӑрас шухӑшпа пупсем шуррисен йенне каҫса рапоҭҭисемпе хресҭенсен влаҫне хирӗҫ ҫар пуха пуҫларӗҫ. Вӗсем авалхи тусӗсемпе пӗрлешсе пирӗнпе ҫапӑҫма тытӑнҭӗҫ. Шуррисемпе вӑрҫнӑ ҫынсем йепле пупсем малтан турӑшсемпе Хӗрлӗ ҫара хирӗҫ пынине нумай ҫӗрте курнӑ. Вӗсенӗн хыҫӗнҭен улпут ывӑлӗсемпе вӗсен шурӑ ҫарӗсем кашласа пынӑ. (Хӑш ҫӗрте пупсем ҭиркӳ тӑрне хӑпарса хӗрлӗ салтаксене пулеметпеле шатӑртаттарнӑ вӑхӑтсем те пулнӑ). Ҫапла ӗнтӗ пупсем мӗн пур вӑйӗпе Канаш влаҫне пӗтерессшӗн тӑрӑшрӗҫ. Анҭах пирӗн Хӗрлӗ ҫар пит хытӗ тӑҭӗ. Рапоҭҭипе хресҭен аҭисем выҫӑллӑ-тутӑллӑ, тумтирсӗр, ҫара уран пулсан та лайӑх тумланнӑ, тутӑ

хырӑмлӑ йут патшалӑх укҫипе вӑрҫакан шурӑ ҫарпа виҫ ҫул ҫапӑҫрӗ. Виҫ ҫул ҫапӑҫса рапоҍ-ҍисемпе хресҍен ирӗкне улпутсен аллине калла памарӗ. Вӑл вӗсене влаҫ пама мар, йулашкинҍен хӑйӗн тӗреклӗ аллипе пӗтӗмпех ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Ку ӗҫ пӗр йенҍен тӗлӗнтерсе йарат. Анҍах уншӑн пӗрре те тӗлӗнмелле мар, мӗншӗн тесен, йупа уйӑхӗнҍе туртса илнӗ влаҫ вӑл рапоҍ-ҍисемпе хресҍенсен влаҫӗ. Кам влаҫӗшӗн вӗсем тата ҫапӑҫҍӑр? Ҫапла вара Канаш влаҫӗ, шуррисене хӑваласа йарсан, сывлӑш ҫавӑрса йаҍӗ, вӑл ҫӑмӑлтарах сывла пуҫларӗ. Вара патша вӑрҫи ҍухне тата револҍутсишӗн ҫапӑҫнӑ ҍухне йурӑхсӑра тухнӑ хуҫайствине йусама, ӑна ҫирӗплетме тытӑнҍӗ. Халӗ ӗнтӗ Канаш респуплӗкӗсем вӑйлӑ патшалӑхсемпе танлашаҫҫӗ.

## Вӑрҫӑ хыҫҫӑн „килӗшӳ".

Канаш ирӗкне пӑшалпа ҫапса ӳкермелле маррине курсан, пирӗн тӑшмансене пит хытӑ сӗрӗм тиврӗ. Капитталиссем пуҫӗсене лӑштах йаҍӗҫ. Ӗлӗкхи ҫӗрӗсене, фапрӑк-савӑҍӗсене, тата мул таврашне калла ҫавӑрма ҫуккине вӗсем пӗлҍӗҫ. Хӑшӗ пӗри йут патшалӑха пӑрахса кайрӗҫ, хӑшӗ ним тума аптранипе Канаш ирӗкне пӑхӑнма, ун май ӗҫлеме сӑмах паҍӗҫ. Ҫапла вара

Раççейри ĕçхалăхĕпе хирĕç çапăçакансен вăйĕ сапалана пуçларĕ. Вĕсем пĕррерĕн - иккшерĕн пирĕн йенне каçа пуçларĕç. Ђи малтан шуррисен афитсерĕсем каçрĕç. Пирĕн йенне каçса вĕсем хăшĕ пĕри халĕ те Хĕрлĕ çарта ĕçлеççĕ. Вĕсем хыççăн Колђђакăн, Тениккинĕн, Вранкелĕн министăрĕсем Канаш ирĕкĕ май ĕçлеме сăмах пађĕç. Çапла капитталиссемшĕн тăракан çынсенђен пирĕн влаçа икĕ тĕслĕ тăшман парăнђĕ.

Епир çавăн ђухнех пупсем те пирĕн йенне каçĕç тесе шухăшларăмăр. Анђах вĕсем, пĕтĕм халăха тамăкри хĕртнĕ çатмасемпе, ђĕлхерен çакса хуракан çеклисемпе хăратсан, ăна пăхăнтарма пулĕ тесе шутларĕç пулмалла. Хура халăха ун пек сехĕрлентерсен, йулашки ђăххине çăмартине, хăй çийес çăкăрне çеç мар, Канаш влаçне çĕнтерме те пулăшĕç-ха терĕç пуљ. Çавăнпа ђиркӳ пуçлăхĕсем йут патшалăха тарнă капитталиссемпе çыхăнса пирĕн çĕрте хăйсен хура ĕçне тума тапратрĕç.



Çак шухăшпа 1919-мĕш çулта патриарх Тихăн (ҫиркӳ пуçлăхĕ) комуниссен парттине ҫиркӳрен уйăрат. Епир комуниссем турра ĕненменнине, тата çавăнпа вĕсем ҫиркӳрен уйрăлнине те пурте лайăх пĕлетпĕр. Апла пулсан, мĕншĕн тата патриарх Тихăнăн унҫҫенех ҫиркӳрен уйăрăлнă çынсене кайран татах ҫиркӳрен уйăрмалла пулнă? Ăна ăнланма питех йывăр мар. Патриарх çапла хăтланни комуниссемшĕн пулман вăл. Вăл тĕттĕм халăхшăн пулнă. Комуниссене ҫиркӳрен уйăрса, Тихăн вĕсем турра ĕненмеççĕ, вĕсен çине турă ылханĕ анмалла тесе,—халăха пистересшĕн пулнă. Партти майлă ĕçе тусан, сирĕн çине те турă ылханĕ анмалла тесе вĕрентнĕ вăл. Çапла вара патриарх ĕçхалăхне комуниссен парттинҫен айакалла сăх-сăха, сăх-сăха тартасшăн пулнă. Анҫах ҫиркӳ пуçлăхĕ кĕтни ахаљех пулҫĕ. Ĕçхалăхĕ комуниссен парттинҫен тарма мар, вăл йертсе пынипе выçăхнă кашкăр пек килекен тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ те, калла килне тавăрănса пурнăçне йусама, ăна сотсиалисăм çулĕ çине кăларма тытăнҫĕ. Çапла вара пупсен туртса кăларнă шухăшĕнҫен нимĕн те тухмарĕ. Вĕсем пуртă таври тăвас тенĕ йапаларан çĕçĕ таври те пулмарĕ. Пурнăçăн

йулашки кунĕсем çывăхара пуçларĕç. Кирек мĕнле выђăх та вилес умĕн „ђунĕпе“ йулашки хут вăйлă ђĕтресе илет. Çавăн пекех ђиркӳ те хăйĕн йулашки кунĕсенђе тепре Канаш влаçне хирĕç тăрса пăхрĕ. 1921-мĕш çулта пирĕн респуплĕксенђе вăйлă выçлăх пулђĕ. Канаш влаçĕ, хăйĕн ĕлĕкхи хатĕр çуккипе, халăха тăрантарма тырă ныçтан та тупса параймарĕ. Çавăнпа, халăха выçă вĕлерес мар тесе, ирĕксĕр ђиркӳрен хаклă йапаласене илсе, унпала йут патшалăхран тырă кӳртерме шут тытрĕ. Ку ĕçре каллах патриарх Тихăн хирĕç тăђĕ. Вăл ђиркӳ йапалисене илме йурамасť, апла туни турра мăшкăлани пулаť тесе, хут кăларђĕ. Вăл хăй „тĕрĕслĕхне“ канонсем тăрăх кăтартма тăрăшрĕ. Ђăнахах çак канонсем тăрăх ђиркӳ йапалине илме йураман-ши вара? Епир унăн канонĕсене шыранă пулсан, Тихăна хирĕç калаканнисене те тупнă пулăттăмăрђђĕ. Анђах епир канонсем шырамасăр-тумасăр ђиркӳн ĕлĕкхи ĕçĕсене пăхрăмăр, мĕншĕн тесен, ĕç ђи илемлĕ çырнă канонран та шанђăклăрах. Ђиркӳн ĕлĕкхи ĕçне пăхсан, епир çакăн пек йапала куртăмăр: çĕр çул кайарах (1812-мĕш çулта) „тăшмансене“ çĕнтермешкĕн Çеркейевски лаврти ђиркӳ таврашĕсене панă. Çакăн çинђен

комуниссем мар (вӗсем ун ҫух пулман та), манахӗсемех хӑйсен аллипе памӗтник ҫине ылттӑн саспаллипе ҫырса хӑварнӑ. Тата пӗррӗмӗш Петтӑр патша турӑш ҫинҫи ылттӑн-кӗмӗле ҫеҫ мар, ҫанӗ таранҫҫен пуҫтарса илнӗ. Мӗскерле ку ӗҫсене вӗсем канон тӑрӑх тунӑ-ши? Ун ҫухне канонсем апла тума ҫарман-мӗн? Халӗ ҫав канонсем тӑрӑхах ҫиркӳ йапалисене перӗнме те йурамасҭ! Мӗншӗн халҫ капла пулнӑши? Мӗншӗн тесен, Канаш влаҫӗ ҫиркӳ пурлӑхне туртса илсе, хресҫене паҫӗ. Вӑл унӑнне ӗлӗкхи савӑнӑҫлӑ кунне ҫакарҫӗ. Ҫавӑнпа ӗҫхалӑхӗ выҫӑпа вилнӗ вӑхӑтра, Тихӑн патриарх шуҫӗпе ҫиркӳсем ылтӑн-кӗмӗлпе йӑлтӑртатса лармалла пулнӑ.



Анҫах ҫиркӳ унпала та нимӗн те кӑларайманмарӗ. Канаш влаҫӗ выҫӑ ларакан халӑх валли ҫиркӳн хаклӑ йапалисене илнӗ вӑхӑтра никам та ӑна ҫармарӗ. Хӑш ҫӗрте, аллӑ утмӑл тӗтӗм карҫӑксемпе йалти пуйансем кӑшкӑркаланинҫен пуҫне, урӑх никам та хирӗҫ пымарӗ. Вара ҫиркӳ, ҫапла хӑтланса, хӑйӗн вӑртӑн тавакан хура ӗҫӗсене палӑртрӗ. Ӗҫхалӑхӗ ҫиркӳ хӑйне

йепле улталаса пынине сисе пуçларĕ. Çавăнпа ĕлĕк ĕненекен çынсем те унтан пăрăна пуçларĕç. Кунтан кайран пупсен йулашки шанђĕкĕ пĕтрĕ. Вĕсем ĕçхалăхне леш тĕнђери тамăкпа та хăратаймарĕç. Вара халăх умĕнђен, сĕрĕм пек, халех çухалас мар тесе, Канаш влаçне ўкерес шухăша пăрахса, пирĕнпе „килĕшў“ тума сăмах пађĕç. Вĕсем хăйсен ĕлĕкхи çулне улăштара пуçларĕç. Çак çулне улăштарнă май, ђиркĕве çĕнетес шухăш та пырса кĕрет. Ăна улăштарас тийекенсем нумайлана пуçлаççĕ.

## Ђиркĕве çĕнетни.

Патриарх Тихăн комуниссене хирĕç вĕслетни, халăх выçăпа вилсе выртнă ђухне ђиркў йапалисене тивме йурамасть тени, тата Канаш влаçне хирĕç тăни пупсен ĕçне йывăрлатнă çемĕн йывăрлата пуçларĕ. Халăх йепле Тихăнтан сивĕнсе пынине вĕсем кура пуçларĕç. Вара ђиркўрен те пĕтĕмпех сивĕтес мар тесе, вĕсем патриарх Тихăна вырăнтан кăларма канаш турĕç. Çак шухăша ĕçе кўртме Мускавпа Ленинкратри, тата ытти хулари пăртапупсемпе пупсем пуçтарăнса, 1922-мĕш çулта Тихăна вырăнтан тухма ыйтаççĕ. Леш вырăнтан тухма сăмах парсан, вара ун вырăнне ђиркў ĕçне

туса тăма—аслă ђиркӳ тытăмне туса хураççĕ. Кун хыçĕнђен ытти хуласенђе те йеппискăпсем вырăнне ђиркӳн тытăмĕ малашне ĕçе тумалла тăваççĕ. Ђиркĕве çĕнетес тийекенсен 1923-мĕш çулта малтанхи пухăвĕсем пулса иртнĕ. Çав пухусенђе вĕсем ђиркĕве çĕнетес тĕлĕшпе, кĕскен каласан, çакăн пек канашланă: Епир халăха хирĕç нихăçан та пыман терĕç, халиђђен пулнă ĕçсенђе ђиркӳн пуçлăхĕсем (архерейсем, митрополитсем тата йеппископсем) айăплă терĕç. Çапла вĕсем хăйсем çинђен айăпа йăлтах сирсе йађĕç. Унтан тата ĕлĕк авланма йураман урçа пупсене халĕ авланма ђармалла мар, пупсене те икшер хут авланма йурать терĕç. Кунтан пуçне тата кĕске тумтирпе те, кĕске çӳçпе те пупсене малашне çӳреме йурать терĕç. Ђиркӳ кĕллисенђе капитталиссем майлă каланă вырăнсене кăларса урăххисене кӳртмелле тесе йышăнђĕç. Малашне тата ђиркӳ Канаш влаçне хирĕç пымалла мар, ĕçсене ун майлă туса пымалла тесе канашларĕç. Халĕ ĕнтĕ пупсем çавăн ђухнехи шухăшсене пурнăçа кӳртме тăрăшаççĕ. Хăш çĕрте кӳрткеленĕ те ĕнтĕ.

## Кашкăрсем сурăх тирне тăхăнђĕç.

Ку таранђђен епир ђиркÿ йепле çĕнелсе пынине пăхса тухрăмăр. Малашне çак çĕнĕ йĕркесем çине ĕçхалăхĕ мĕскерле куçпа пăхмалли çинђен сÿтсе-йавăпăр. Илĕр халĕ çĕнĕ ђиркÿн пĕр вырăнне. Халĕ пупсем ĕлĕк револђутсийе хирĕç тунă хура ĕçĕсене йышăнасшăн мар. Вĕсем ун пирки аслисене çеç айăпласшăн. Мĕскерле-ха ку апла пулнă? Кам урлă аслă пупĕсем хăйсен хура шухăшсене ĕçе кÿртсе пынă? Камсем ун ђухне çав аслисем хушнине халăх хушшине сарма тăрăшнă-ши? Тĕрĕссипе каласан, кĕçĕн пупсем те ку ĕçре айăкра тăман пулмалла. Вĕсем айăккинђе йулнă пулсан, йе тата аслисем хушшнине ун ђухнех хирĕç пынă пусан, епир ăна пĕлĕттĕмĕр. Çавăнпа кĕçĕн пупсем те, ун ђухне аслисене пулăшса пынă тенĕшĕн, пире ÿпкелемĕç тесе шухăшлатпăр.

Халĕ аслă пупсем авланма йураť тенине илер. Ĕлĕк аслисен ђиркÿ йĕркипе авланма йураман (вĕсенĕн вăрттăн арăмĕсем темиçе те пулнă пуђ те-ха). Мĕншĕн йураман-ши? Мĕншĕн тесен, ĕлĕк ђиркÿ пиť пуйан пулнă. Вăл çав мула елхерейсен арăмĕсем, тата ађи-пăђисем çине салатса йарасшăн пулман. Халĕ ĕнтĕ,

ҫиркĕвĕн ылтăн-кĕмĕлне, тата фапрăк-савăҫĕсене туртса илсен, елхерейсен арăмĕсен, аҫипăҫисен çук мул саланса пĕтесрен пĕртте хăрамалла мар пулҫĕ. Çавăнпа вĕсене халĕ пĕрре мар, вунă хут авлансан та никам ҫарас çук. Тата пупсен кĕске тумтирпе, кĕске çӳçпе çӳрени пирĕншĕн нимĕне те пĕлтермест. Çавăн пекех кĕлĕ йĕркинҫен капитталиссен майлă калакан вырăнсене кăларса пăрахса урăххине кӳртни те пире хăваслантарас çук. Мĕн тĕрлĕ пысăк çĕнетӳсем (улшăнусем) ҫиркӳре тусан та, вăл хăйĕн ĕлĕкхи сăнне çухатаймасť. Ҫиркӳ ҫиркĕвех йулаť, ун никĕсне пĕр йышши кирпĕçрен тунă. Анҫах çĕнĕ ҫиркӳ тийекенни (пит ҫейе пулса) хăйĕн ĕçхалăхĕн пуçне çавăрарах пама пултараť. Вăл çак револютси хумĕ хăйне çапнă çемĕн шалалла кĕрсе пыраť. Вăл Канаш власĕ вăхăтĕнҫе те хăйĕн халăха сĕрĕм тивертес шухăшне пăрахасшăн мар. Çавна пирĕн астуса тăрас-ҫĕ. Маларах каланă пек, ҫиркĕве мĕн тĕрлĕ çĕнетсен те, ĕнерен лаша тăвайман тенĕ пек, нимĕн усси те пулас çук. Ăна темиçе майăн çавăркаласан та, унтан Канаш власне, ĕçхалăхне йурăхлă йапала тума çук, мĕншĕн тесен, вăл капитталиссене çеç халăха пăхăнтарса тăма кирлĕ пулнă. Вĕсем

ҫиркӳ урлӑ халӑха ҫапла каласа вӗрентнӗ: ҫак тӗнҫере йывӑр пулсан та, ҫӑтӑр, ун вырӑнне сире леш тӗнҫере ҫӳлти патшалӑх пулӗ, тенӗ. Халҫ те нумайҫҫен епир капитталиссен мӑшкӑлне ҫӑтрӑмӑр. Ҫӑтрӑмӑр епир 1917-мӗш ҫулҫҫенех. Вара ҫук, ҫитӗ, урӑх ҫӑтма пултараймастпӑр! терӗмӗр. Аслӑ Революци тусан, хамӑрӑн ӗнсе ҫинҫе ларакансене сирпӗтсе антартӑмӑр та, пурнӑҫа хамӑра кирлӗ пек тума пуҫларӑмӑр. Авалхи йӗркесене пӑсса, наукӑ кӑтартнӑ пек ҫӗнӗ йӗрке, ҫӗнӗ пурнӑҫ тума тытӑнтӑмӑр. Ҫак ӗҫре пире ҫиркӳ пит кансӗрлесе пыраҭ. Пупсем хӑйсен ӗлӗкхи



тумтирӗсене пӑрахса, Канаш влаҫӗ май ӗҫлетпӗр тесе, сурӑх тирне тӑхӑнҫӗҫ пулсан та, кашкӑр „йӑлисене“ пӑрахмаҫҫӗ. „Кашкӑра мӗнле ҫитерсен те, вӑрманалах пӑхаҭ“, тенӗ ваттисем. Ҫавӑн пекех ҫиркӳ те ӗлӗкхи пурнӑҫ патнеллех туртаҭ. Вӑл тӗттӗм халӑха йепле улталаса пурӑнни ҫинҫен нумай калаҫнӑ та,

çырнă та, ун çинђен ђăвашла кĕнекесем те пур ĕнтĕ. Çавăнпа кунта ун çинђен татах çырмăпăр.

Йулашкинђен çакна каламасăр хăвармалла мар. Халĕ пире Канаш влаçĕ ђиркӳпе турра ĕненме те, ĕненмесĕр пурăнма та ирĕк пађĕ. Çав майпа йалсенђе турăсăр ушкăнсен йађейккăсенђе ĕçлекен çынсем мĕн вăйĕ çитнĕ таран, тата мĕн пĕлнĕ таран тĕттĕм халăха йепле пупсем вĕсене халиђђен улталаса пурăннине, тата путланма тытăннă ĕçĕсене çĕнĕрен ђĕртсе йарас шухăшĕсене те тĕплĕн ăнлантара-ăнлантара парас пулаť. Вара епир, пупсен ывăçĕнђен ĕçерĕнсе, пĕтĕм халăхпа пĕр канашлă пулса, хамăр пурнăçа, наукка кăтартнă пек, сотсиалисăм çулĕпе тата хăвăртрах йама пултарăттăмăр. Турăсăр ушкăнсенђе ĕçлекенсен çакна манмалла мар: вĕсемшĕн мĕн пур наук-кăпа истори тăраť. Наукка (етем аслăлăхĕ) пулăшнипе епир капитталиссен йулашки тĕрек-лĕхне илĕпĕр.

Хакě 5 пус